28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
12
ВЫРСАРНИКУН
155(6906) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

## Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç çителĕксĕр пыни çинчен

### ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла шутлать: республикăри колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕçе Йĕпреç районĕнче уйрăмах япăх йĕркеленĕ. Унта 52 колхозран 27 колхоз кăна тырă вырма тытăннă. Элĕк районĕнче тырă вырма 19 колхоз тытăнман, Ишлей районĕнче—21 колхоз, Красноармейски районра—44 колхоз, Хĕрлĕ Чутай районĕнче—18 колхоз, Первомайски районра—27 колхоз, Шупашкар районĕнче—26 колхоз тытăнман.

Кĕрхи тырăсем пур çĕрте те пухса çитнĕ, тырăсем кĕçех тăкăнма пуçласçĕ, çакна пула тырпул нумай тăкăнса пĕтме пултарать, анчах çакна пăхмасăрах, парти райкомĕсемпе райисполкомсем тата çĕрĕç органĕсем тырпул пухса кĕртесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление асра тытма тата ăна пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртсе пыма хушас.

2. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене колхозсенчи сушилкăсене, лупасайсене, витнĕ итемсене, авăнсене, ăсбарсене юсаса йĕркене кĕртес тата вĕсемпе тулли усă курас тĕлĕппе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас. Сушилкăсенче талăкĕ-талăкĕпех тырă типĕтмелле тăвас шутпа, вĕсем валли вутă кирлĕ таран хатĕрлесе памалла. Çĕнĕ сушилкăсем, витнĕ итемсемпе лупасайсем, авăнсем тăвас тĕлĕппе, çавăн пекех уйрăм çуртйĕрсене тырă типĕтмелле тата тырпула вăхăтлăх хурса усрамалла тăвас колхозсене заданисемпе сроксем памалла. Çапла вара кашни колхозрах кирек мĕнле çанталăкра та пĕр чарăнмасăр авăн çапма тата государствăна тырă пама кирлĕ условисем туса хумалла.

Авăн çаннă çĕрте МТС-семпе колхозсенчи пур пек молотилкăсемпе пуринпе те туллин усă курмалла, çавăн пекех авăна тăпачăсемпе çапассине те организацилемелле, çапла вара кашни колхозăн государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла.

Транспорт бригадисене государствăна тырă парас ĕçпе çыхăнман урăх ĕçсене яма чарас.

Витнĕ итемсемпе лупасайсем, сушилкăсем тăвас тата вĕсене юсас ĕçре колхозсене вырăнти строительство материалĕсем парса пулăнмалла. Колхозсенче опытлă колхозниксене уйăрса, вĕсем çине тырпула сыхă упрас, типĕтес тата сушилкăсене талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеттермелле тăвас ĕçĕн ответлăхне хумалла. Колхозсене витнĕ итемсемпе лупасайсем, сушилкăсемпе авăнсем юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçре пулăнма партине совет активне ялсене ямалла тăвас.

3. Партине çĕрĕç органĕсене тата колхоз правленийĕсене тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилесси çине тимлĕн çаврăнса пăхма хушас. Тырпул пухса кĕртес мĕнпур ĕçсенче уйрăм сдельщинăпа тата пысăк мар ушкăнсемпе ĕçлемелли сдельщинăпа анлăн усă курмалла. Пур колхозсенче те пĕрлешсе апатланассине, ача ялисемпе площадкисем организацилемелле. Тырă вырса пухас ĕçе тĕрĕс шута илсе пымалла, тырпул мĕн чухлĕ тухнине бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмпаран шута илессине йĕркелемелле, çакă вăл тырпул тухăçлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене тата МТС-ри трактористсене хушса тӳлеме лайăх май панине асра тытмалла. Колхозниксене вĕсем ĕç нормине мĕнле тултарса пынине тата кун каçиччен мĕнле ĕçлунĕ тунине куллен пĕлтерсе тăмалла.

4. ВКП(б) райкомĕсене тата райисполкомсене колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçĕн пахалăхне çирĕп контрольлесе тăма, тырпула тăкăланине хирĕç татăлăн кĕрешсе пыма хушас. Тырра çулнă е вырнă хыççăн çыхмасăр хăвармалла мар, вырса кайнă хыççăнах пучах пухассине йĕркелемелле. Çапла йĕрке тăвас: уйрăм бригадисен бригадирĕсем кашни колхозникран куллен ĕç пахалăхне тĕрĕслесе йышăнаççĕ, колхозсен председателĕсем вара участокри ĕç пĕтнĕ хыççăн 3 кунран кая юлмасăр уйрăм бригадисенчен йышăнаççĕ.

Начар тунă ĕçе çĕнĕрен ĕçкупĕсем хушса памасăрах тепĕр хут ĕçлеттермелле.

5. Парти райкомĕсене, яхăн партине комсомол организацийĕсене тырпула вăлхăтра пухса кĕртессинĕн, тырпул хатĕрлемелли плана срокченех тултарассишĕн, колхозсенче социализмлă ăмăрту сарса яма хушас. Колхозсенче, бригадăсенче ăмăрту мĕнле пынине кăтартмалли пăмăсем, малта пыракан бригадăсене пама — куçса çӳрекен ялавсем, звенносем валли — флажоксем тумалла. Колхозниксене, колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене тырпула вăхăтра пухса кĕртнин тата государствăна тырă памалли плана срокченех пурнăçлани хамăрăн Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетмелли çăлкуçĕ пулса тăни çинчен куллен ăнлантарса памалла.

**ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.**

## *СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Ван Ши-цзе господина йышăнни*

Августăн 10-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне Ван Ши-цзе господина йышăннă.

Йышăнура саксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, Китай Республикин Совет Союзĕнчи посолĕ Фу Бинчан господин тата Китай делегацийĕн членĕ Лю Цзе-жун господин.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### АВГУСТĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Августăн 11-мĕшĕ хушшинче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче совет çарĕсем ВАСИЛЕВСКИЙ Маршал тĕп командир пуяса ертсе пынипе Маньчжурире малалла наступлени туса пынă.**

**Примерьере ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТĂН çарĕсем, МЕРЕЦКОВ Маршал командир пулса ертсе пыни пе, тăшман хирĕç тăнине тата сăртлăвăрманлă вырăнăн йывăр условийĕсене çĕнтерсе, БАНЬЦЗЕХЭ, ПИНЯНЬЖЕНЬ, ЛИШУЧЖЕНЬ, МУЛИН (Бамянь Тунь), СЯЧЕНЬЦЗЫ, СИНЮАНЬЧЖЕНЬ (Маньюхэ), МУЛИНЧЖАНЬ (Мулин), ТУМЫНЬЦЗА хулисене тытса илнĕ, çавăн пекех тата УЖЕНБЭР, ГАОЛИН, МАИНЗА, ВАНБАБОЦЗЫ, ДУНСИНЬЧЖЭНЬ, ТАЙЛИНЧУАНЬ, МАДИДА ятлă пысăк ялсене тата СЯЧЕНЬЦЗЫ, МУЛИНЧЖАНЬ ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ, 15—25 километр малалла кайнă.**

**ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-МĔШ ФРОНТĂН çарĕсем, армени генералĕ ПУРКАЕВ командир пулса ертсе пынипе, ХАБАРОВСКРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, хăвăрт наступлени туса, СУНГАРИ шывĕ çинчи ФУГДИН (Фуцзинь) хулипе юханшыв портне çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата УССУРИ шывĕн хĕвеланăç енче СЯОЦЗЯХЭ хулине туртса илнĕ, 30 километр малалла кайнă.**

**БЛАГОВЕЩЕНСК хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, АМУР шывĕ урлă каçса, ЦИКЭ хулипе СЫЦЗИТУНЬ, ХАДАЯНЬ, ГАНЮХУ, ГАОТАНЬ ятлă пысăк ялсене çапăçса тытса илнĕ.**

**БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТĂН çарĕсем, МАЛИНОВСКИЙ Маршал командир пулса ертсе пынипе, малалла наступлени тунă, ДАЛАЙ-НУР кӳлли районĕнче ЦАГАН чугун çул станцине тата ДАМУБО СУМЗ, ГАНЬЧЖУР, АМУГУЛАНЬ ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.**

**Августăн 11-мĕшĕнче кун каçиччен пирĕн хăвăрт куçса пыракан çарсем Байкал леш енче, ПЫСАК ХИНГАН тăвăсем урлă каçса, 80 километр малалла кайнă.**

**Пирĕн авиаци Маньчжурири чугун çул узелĕсене çаплах пыра-пыра çапнă.**

**Лăпкă океан флечĕн карапĕсемпе авиацийĕ, ЮМАШЕВ адмирал командир пулса ертсе пынипе, августăн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче СЕЙСИН, РАСИН тата ЮКИ порчĕсенче тăшманăн транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Çавăн чухне японецсен вунпĕр транспортне шыва путарнă.**

**СОВИНФОРМБЮРО.**

### МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН КĔÇĔН ХУРАЛĔ ТАТА ПРАВИТЕЛЬСТВИ ЯПОНИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇА ТУХАССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

Монголи Халăх Республикин Кĕçĕн Хуралĕ тата Правительстви, Монголи халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех ирĕклĕхинĕн, никама пăхăнмалăхăн тата хăй тĕллĕн пурăнассишĕн тăрăшнине шута илсе;

Монгол йăхĕсем авалтанпах демократилĕ кӳршĕсемпе пуринпе те пĕр çемьери пек мирлĕ пурăнма тăрăшнине шута илсе;

Хамăран уйрăм государствăна пĕтĕçсе пурăнассине ура çине тăратса, ăна çирĕплетес тĕлĕппе пире, Монгол халăхне, тăванла пулăшнă Совет Союзĕнчи халăхсене тăванла хисеплесе;

1936 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче Улан-Батор хулинче Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республики пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор тăрăх инкĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртмеллине шута илсе;

Çавăн пекех демократилĕ государствăсемне тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем хăвăртрах пĕтĕмĕшлĕ мир туса хурассишĕн пĕр пек пулса тăрăшнипе хавхаланса;

Пĕрлешнĕ Нацисен ĕçне хутшăнас тесе, —çавăнпа Пĕрлешнĕ нацисен енне тăрса Японие кирĕç таса вăрçа тухасси çинчен тата Совет Правительстви августăн 8-мĕшĕнче Мускавра тунă заявлени çумне нĕтĕмĕшлĕх пĕрлешни çинчен чăлăн пĕлтерет.

## Япони правительстви парăнасси çинчен пĕлтерни пирки

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио каласа панă тăрăх, Вашингтонра çапла пĕлтернĕ: тăвата союзлă держава—Великобритани, США, Россия тата Китай—японецсем парăнасси пирки панă сĕнĕве йышăннă, анчах вĕсем çав сĕнĕве Япони императорĕ союзниксен верховнăй командованийĕн приказĕсене пăхăнать пуçсан кăна йышăнаççĕ. Çакăн çинчен паян кăнтăрла США государственнăй секретарĕ Бирнс Швейцарин Вашингтонри миссийĕ урлă янă пĕлтерӳре каласа панă. Союзниксен ответĕнче çапла каланă: парăннă вăхăтран пуçласа императора тата Япони правительстви союзниксен верховнăй командованийĕ кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ.

Императорпа правительство Потсдамри декларацире кăтартса панă условисене пурнăçа кĕртсе пыма тивĕçлĕ. Императорăн çарпа флотăн пур командующийĕсене те, вăрçă ĕçĕсене чарса лартмашкăн кăтартусем пама хушса, приказ памалла. Кунсăр пуçне, императорăн союзниксен верховнăй командованийĕ кăтартса панисене пăхăнмалла. Союзниксен ответĕнче çавăн пекех тата çапла каланă: Японие тытса тăмалли татăклă форма, Потсдамри деклараци тăрăх, халăхăн ирĕклĕн калаçма панă кăмăлĕпе килĕнсе тăмалла. Потсдамри декларацире каласа панă тĕллевсене пурнăçа кĕртиччен союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсем Японирен юлаççĕ.

## Тăшманпа малтанхи хут тĕл пулнисем

Каран тин кăна боевой операцирен тавăрăнчĕ. Каран çинчи çынсем пурте кӳрăсывах. Моряксен пичĕсенче савăнăç палăрать. Командовани панă заданине пурнăçланă. Пурте çав тери хавасланаççĕ, пурте çĕнĕ задани илсе ăна пурнăçа кĕртессишĕн, Япони самурайĕсене татăклăрах пырса çапассишĕн çунаççĕ. Халĕхе операцире пулнисем тăшманна малтанхи хут тĕл пулни çинчен пĕрне-нĕри каласа параççĕ.

Тĕрлĕ йышши çарсем пĕр-пĕрне çапăçура лайăх пулăшса пынă. Пехотинецсемпе моряксем пĕр-пĕрне çул çинче те, шыв урлă каçнă çĕрте те, тинçĕр çинче те, çапăçура та пулăшса тăнă. Краснофлотецсемпе пехотинецсене пирĕн авиаци питĕ лайăх пулăшнă.

Н. пункчĕнче стрелоксен чаçĕсем тăшманпа штык вĕççĕн çапăçма пуçланă. Японецсем пирĕн подразделенисен наступленине чарса лартма тем тери хăтланнă, вĕсем хаяр контратакăсем тунă. Çапăçу хĕрнĕçемĕн хĕрсех пынă.

— Акă пире пулăшма карапсем килеççĕ.

— Тупăсене çапăçăва хатĕрлĕр!—илтĕнчĕ карапсем çинче.

Нумай кĕтмĕ самант çитрĕ.

— Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн, тăшмана хирĕç перĕр! Пĕр харăссăн илтĕнсе каяççĕ пăшал сассисем.

Машканцев капитан-лейтенант ертсе пыракан каран çинчи артиллеристсем кăларса янă пирвайхи снарядсемех тăшманăн темиçе дотне пĕтерсе тăкнă.

Çакăн хыççăн пĕтĕм флотилире палăрса тăракан Анучин старши лейтенантăн артиллерисчĕсем монитор çинчи тупăсенчен неме пуçласçĕ. Пуринчен малтан вĕсем тăнман вăйлăн çирĕплетнĕ высота çине неме пуçласçĕ. Ик-виçĕ минут кăна иртрĕ, сонкăна пĕтĕмпех снарядсем сухаласа тухрĕç.

Гварди миномечĕсем сĕмĕртерме пуçласçĕ.

Амур флотилийĕнчи артиллеристсем питĕ тĕл пересçĕ.

Çакăнпа пĕрлех каран çинчен десант антарнă. Пехотинецсем моряксемпе пĕрле урăх çине тăрасçĕ те «ура» кăшкăрса, атакăна кĕрсе каяççĕ. Вĕсене сталинла соколсем самолетсем çинчен пулăшса пыраççĕ. Цирĕн бомбардировщиксем, штурмовиксемпе истребительсем совет карапĕсене сывлăпран хӳтĕлесе тăнă çеç мар, вĕсем высотана атакăлама та пулăшаççĕ.

Татăклă атака ăнăçлăн вĕçленет—высотана пирĕнницем тытса илеççĕ.

Боецсем хушшинче патриотла туйăм çав тери вăйлă палăрать. Иккĕмĕш статьяри старшина Иванкович ертсе пыракан тунă Япони çарĕ çине 46 хутчен харăслатса пенĕ. Капăн пемессеренех вăл пире çĕнтерӳ кӳрекенĕн, аслă Сталинăн ятне асăннă. Аманнисем те çапăçуран тухасăн мар. Çапăçăва кĕрес умĕн çынсем хăйсене коммунистсем тесе шутлама пăтраççĕ.

Пирвайхи тĕлпулусемех тăшманăн ирĕр чупне кăтартса параççĕ.

Япони военнипи яланах тĕрлĕ ирĕр те тискер меслетсемпе, провокацисемпе усă курма юратнă. Пирвайхи çапăçусенче те çавăн пекех пулнă.

Пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан «Н» ятлă пунктра çапăçнă. Квартал хыççăн квартал йышăнса, ăна тăшманран тасатса пынă. Хăйсен ĕçĕ путланса ларнине кура, Япони офицерĕсемпе салтакĕсем, вырăссен темиçе сăмахне вĕреннĕ те краснофлотецсемпе красноармеецсене çапла кăшкăрса каланă:

— Своя, не стреляй!

— Сдаюсь!

Анчах çакă вăл ултăлама хăтланни кăна пулнă. Пирĕн боецсем японецсем патне сывхарсан, вĕсем красноармеецсем çине гранатăсем пынăтнă, пистолетсенчен пенĕ, сĕçĕсемпе чикнĕ.

Малтанхи çапăçусем, малтанхи тĕлпулусем, малтан курни-илтнисем... Анчах мĕн тери нумай каласа параççĕ вĕсем. Пирĕн умма Тăван çĕршыв вăй-хăвачĕ, пирĕн çынсен тӳрĕ кăмăлĕ çав тери усăлла тухса тăрать.

**К. ДИНАМОВ.**

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА АМУР ФЛОТИЛИЙĔ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).

## Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

### 1945 çулхи çурхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн Чăваш республикинчи районсемпе МТС-сем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăван итогĕсем çинчен

1945 çулхи çурхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн Чăваш республикинчи районсемпе МТС-сем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăван итогĕсем пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çураки планне пĕтĕмпе тата иртерсе тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăртура çак районсемпе МТС-сем мала тухнă тесе йышăннă:

1. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 8 пин тенкĕ укçа Вăрнăр районне памалла тунă.

Çуракине иртерес, тырпулсене пăхса ӳстерес тата çĕртме тăвас тĕлĕппе Сĕнтĕр, Шăхасан, Вăрмар, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Калинино, Елчĕк, Çĕрпӳ районĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

2. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 4 пин тенкĕ укçа Вăрнăр МТС-не пама йышăннă.

Çураки ĕçĕсен планне тата çĕртме тумалли плана тултарас тĕлĕппе Шăхасан Красноармейски, Куславкка, Йĕпреç, Çĕрпӳ, Елчĕк, Калинино МТС-ĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

## Чăваш АССР Совнаркомĕнче

### 1945 çулхи çурхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн Чăваш республикинчи колхозсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăван итогĕсем çинчен

1945 çулхи çурхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн Чăваш республикинчи колхозсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртăван итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ Вăрнăр районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоза, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза, Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоза, Советски районри «Сеятель» колхоза тата Комсомольски районри «Трактор» колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

## *НАГРАДĂСЕМ ПАНИ*

Августăн 10-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Малтанах Чăваш АССР-чи шкулсен тава тивĕçлĕ учителĕн Хисеплĕ грамотисене Шупашкарти вăтам шкулсенчи учительсем В. И. Козлова, В. И. Ребровская тата А. И. Туймедова юлташсем илнĕ.

Чăваш АССР-чи тава тивĕçлĕ артистăн Хисеплĕ грамотисене Чăвашсен государство академи театрĕн артисчĕсене М. П. Аденцев, Р. И. Анапьева, А. А. Долгова, Е. В. Шорникова юлташсене, Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн солисткисене А. Г. Казакова, З. М. Павлова, М. И. Симулина юлташсене панă.

Чăваш АССР-чи искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн Хисеплĕ грамотисене Чăвашсен государство академи театрĕн главнăй художникне Б. А. Архангельский юлташа, Чăвашсен государство академи театрĕн режиссерне Г. А. Морев юлташа, Чăвашсен государство академи театрĕн художество руководительне Л. А. Родионов юлташа, Чăвашрадиокомитетăн юрă ансамблĕн руководительне Г. Я. Хирбек композитора, Г. С. Лебедев композитора панă.

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă май, ялхуçалăхне, промышленноçа, культурăна тата искусствăна атăлантарас тĕлĕппе тунă çитĕнӳсемшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине 123 çынна панă.

Суту-илӳ ĕçĕнче, хатĕрлев организацийĕсенче, обществăллă апатлану системинче тата предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсенче лайăх ĕçленĕшĕн 32 çынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă.

Награда илекенийсем партипе правительствăна тата Сталин юлташа тав туса малалла та хастарлăн ĕçлеме сăмах панă.

Юлашкинчен, З. А. Андреева юлташ, награда илекенсене Хисеплĕ грамота илнĕ ятпа саламласа, малашне татах та ăнăçлăрах ĕçлеме сывлăх суннă.

## Физкультурăпа спорт ĕçне лайăхлатар

Паян—Пĕтĕм Союзри физкультурниксен кунĕ. Паян пирĕн çĕршыври нумай миллионлă физкультурниксем Тăван çĕршыва, тăван халăха, аслă Сталина вĕçĕмсĕр юратнине, Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçма яланах хатĕр тăнине кăтартса параççĕ. Физкультурник кунĕ вăл совет çамрăкĕсен ихĕлми вăй-хăватне, тĕреклĕ сывлăхне, вĕсем кирек мĕнле ĕçре те ĕçлеме, пур ывăлăхсене те çĕнтерме хатĕррине кăтартса памалли кун пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра физкультурăпа спорт ĕçне лайăх туса пыма пур условисене те туса панă. Партипе правительство вăрçăн йывăр çулĕсенче те ку ĕç валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăчĕç.

Массăллă физкультурăпа спорт ĕçĕ нумай çынсен кулленхи йăлине кĕчĕ. Çакна спортăн массăллă ăмăртăвĕсене ĕçсӳннисем йышлăн хутшăнни те лайăх кăтартса парать. Комсомолецсемпе профсоюзсен кăçал иртернĕ кросне кăна пирĕн республикăра 11.000 çын ытла хутшăннă.

Республикăри нумай колхозсемпе шкулсенче физкультура коллективĕсене организациленĕ, спорт площадкисемпе стадионсем тунă. Çĕрпӳ районĕнчи Туçи колхозĕнчи йĕлтĕрĕсем тата вĕсен çăмăл атлетика команди республикăри ăмăртусенче пĕрре кăна мар малти вырăна тухнă. Республика 25 çул тултарнă ятпа иртернĕ спартакиадăра ку колхозран килнĕ Соколов тата Дрезина физкультурниксем 1000 тата 500 метра хăвăрт чупса тухса, виççĕмĕшпе пиллĕкмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Ку коллективран кайнă Сергеев юлташ Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕпе чи лайăх рекордсменсенчен пĕри шутланать.

Çавăн пекех Ишлей районĕнчи физкультурниксем те спартакиадăра пăхса тĕслĕхсем кăтартрĕç. Демидовпа Александров юлташсем велочупура мала тухса республика чемпионĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Коган юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ пулса ĕçленĕн заводри футбол команди Чăваш республикин кубокне хăй аллинче тытса тăрать. Кунта хăвăрт тата инçе чупассипе, инçессипе, çăмăл атлетикăпа час-часах ăмăртусем пулса иртеççĕ. Физкультурăпа спорт ĕçне лайăх туса пынăшăн ку коллектив ВЦСПС премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Физкультурăпа спорта ĕçсӳннисен анлă массисем хушшине сарас тĕлĕшпе-ситменлĕхсем те сахал мар-ха. Ку ĕç уйрăмăнах колхозсенче, шкулсенче çителĕксĕр пулса пырать. Пумай районсенчи колхозсенче физкультурăпа спорт ĕçне юхăнтарса янă, тĕрлĕ командăсем, кружоксем ĕçлемеççĕ, площадкăсемпе стадионсем çук. Çамрăксем хушшинче «ГТО» тата «БГТО» нормисене парассине массăллăн организацилемеççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Пĕтĕм Союзри физкультурниксен кунне хатĕрленесси çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕ. Унта физкультурăпа спорт ĕçне уйрăмăнах колхозсенче, шкулсенче, ĕçсӳннисен анлă массисем хушшинче лайăх туса пымалли çинчен калана. Анчах çав постановление ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕппе ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен Комитечĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çамрăксене физически воспитани парас ĕçе лайăхлатса, спорт ĕçĕн пахалăхне хăпартмалла. Спорт обществисемпе физкультура коллективĕсен ĕçне вăйлатса, спорт ĕçне кашни ĕçсӳннин кулленхи йăлине кĕртмелле.

## *Л. Н. Толстойăн музей-килне уçни*

Мускавра, çĕнĕрен юсанă хыççăн, Л. Н. Толстойăн музей-килне уçнă. Çав çуртра вырăссен аслă писателĕ хăйĕн семьипе 1882 çултан пуçласа 1901 çула çитичченех пурăннă. Музей вырнаçнă 16 пӳлĕмре Толстой пурнăçĕпе тата унăн ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан нумай япаласене авал мĕнле пулнă çавăн пекех туса хунă. Кунта Л. Н. Толстой «Смерть Ивана Ильича» повеçе, «Воскресенье» романăн чылай пысăк пайне, «Живой труп» драмăн пĕр пайне тата ытти произведенисене те çырнă.

Çак çуртра Л. Н. Толстой патне А. П. Чехов, М. Горький, Д. В. Григорович, Н. С. Лесков писательсем, аслă музыкантсем, общество деятелĕсем, ученăйсем, рабочисем, студентсем пырса çӳренĕ. Толстой кунта çырнă юлашки произведенийĕ—Синод ăна чиркӳрен уйăрни çине ответ пани пулнă.

Столовăй ĕлĕк епле пулнă, халĕ те çавăн пекех: апат çимелли сĕтелĕ те, хăнасене йышăнмалли зал та, журфикссемпе концертсем иртнĕ пӳлĕм те çаплипех юлнă. Вăл çуртра Репин, Ге, Маковский тата ытти художниксем ӳкернĕ портретсем пур.

Музее уçнă кун нумай çын—писательсем, художниксем, музыкантсем, профессорсем, вĕренекенсем пырса курнă.

**(ТАСС).**

# Государствăна тырă парасси— колхозсен пĕрремĕш тивĕçĕ

**Авăн çапмалли тата государствăна тырă памалли графика кашни колхоз, кашни район пĕтĕмĕшпех тултарса пытăр!**

## Ыраш акма тытăнчĕç

**МУРКАШ, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Ырăна иртерех акса уçăлă пулнине кашни колхозник лайăх пĕлет. Пирĕн колхозсем кăçал ыраш акма лайăх хатĕрленчĕç. Çĕртме пуссине икĕмĕш хут сухаласа хатĕрлес ĕçе пĕтĕм районĕпе эрне каялла вĕçленĕ. Колхозсенче 52 сортировка пур, вĕсем пурте юсавлă. Паян «Свобода», «Герой», «Красное Сормово», «Пионер» тата Маленков ячĕпе тăракан колхозсем ыраш акма тухрĕç. Паян-ыранах пытти колхозсем те кĕрхи тырăсем акма тытăнаççĕ.

**Ф. АЛБУТОВ.**

## *Авăн çапаççĕ*

**ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Районра пĕрремĕш ыраш выраççĕ. Малта пыракан «Красный Октябрь», Нарман ячĕпе тăракан колхозсем ыраш вырса пĕтерчĕç. «Красный Октябрь» колхозăн кăçалхи ыраша çапса 120 пăт хатĕрлем пуянтăк лесрĕ. «РОКК» колхозăн 215 гектар ыраш вырнă, кунта ыраш ураша вырса пĕтереççĕ. «Канаш» колхозăн вырмалли пурĕ те 30 гектар кăна çурнă. Паянхи куна районĕпе 2577 гектар ытла вырнă. Пур колхозсенче те кăçал уйрăм сдельщинăна, уйрăм участоксенче çĕлеççĕ. Нумай колхозниксем çумăр çуман вăхăтпа усă курас тесе, çĕрле те тырă выраççĕ.

Анчах та районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Уйрăмăнах «Алга», «Красное знамя» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ.

Паянхи кун тĕлне 15 колхоз авăн çапма тытăннă, вĕсем пурĕ 32 гектар çинчи тырра çапнă. Чылай колхозсем ыраш акма та тухнă.

**А. РОМАНОВ,**
**ВКП(б) райкомăн секретарĕ.**

## 5000 гектар ыраш вырнă

**ЕЛЧĔК, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхозра (председателĕ орденоносец В. Зайцев юлташ) паянхи кун тĕлне 168 гектар ыраш вырнă. План тăрăх тепĕр икĕ кунтан колхоз ыраш вырса пĕтерĕхет. «Марс» колхозăн (председателĕ орденоносец А. Ганзов юлташ) 290 гектар ыраш вырса пухмалла, паянхи куна 100 гектар ытла вырнă. Кунта 8 жнейка ĕçлет, нормăна тултарайман пĕр машинист та çук. Ленин ячĕпе тăракан колхозра 10 бригадăн пурĕ 570 гектар вырса пухмалла. Кăçал кунта сурласемпе тырраççĕ, çавасемпе çуласçĕ, маминăсемпе вырaççĕ. Çапла вăçĕ кун хушшинче 402 гектар вырнă, кĕлтесене тирĕтсе çĕмеле пулнă. «КИМ», «Ново-Ищеряково» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем паянхи ыраш вырса пĕтереççĕ.

Анчах та районра ыраш вырассине чăтма çук юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Уйрăмăнах «Коммунист», «Автогигант», «Канаш», «Красный часовой» тата Дзержинский ячĕпе тăракан колхозсем юлса пыраççĕ. Çак колхозсем 30—40-шер гектар кăна вырнă. Кунта ĕç тухăçлăхĕ начарри чи малтанах ĕç дисциплини çирĕп марринчен, уяр çанталăкпа туллин усă курманнинчен, маминăсем час-часах ĕççĕр ларнинчен, уйрăм сдельщинăна ĕçлессине кирлĕ пек организацилемеммипе кирлĕ пек организацилемеммипе килет.

Ыраш вырас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсен малтисемпе танлашас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

**Н. МАКАРОВ.**

## *Жнейкăпа 7-шер гектар вырaççĕ*

**ВĂРНАР, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Яхуçадăх ĕçĕнче хĕрлĕх тапăр пуçланчĕ. Ăнса пулнă тырпула пухса кĕртесси пысăк та ответлă задача пулса тăнине колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Утарти «Трактор» колхозра уйрăм сдельщинăна ĕçлеççĕ. Ыраш вырнă вăхăтра ĕçлеме вăйлитти çынсене 1 гектар, подростоксене 0,5 гектар уйăрса панă. Кашниех хăйĕн участокĕнче пĕччен е пĕчĕк ушкăнпа ĕçлет. Кулленхи нормăна тултаракан колхозниксем вунпилĕк шутланаççĕ. Жнейкăпа выраканн Н. Егоровпа С. Трофимов юлташсен план тăрăх каннинех 4-шар гектар вырмалла, вĕсем вара 6—7-шер гектар выраççĕ.

Колхоз ыраш акмалли лаптăка пĕтĕмпех икĕ хут сухаласа хунă. Сеялка юсавлă. Ыраш акма тытăнаççĕ. Акасса кăçал ураша пĕтĕмпех ретĕн-ретĕн маминăна акма пăшнă. Халĕ акма кирлĕ вăрлăха хатĕрлеççĕ.

**Е. ВОЛКОВ.**

## Мĕншĕн машинăсемпе усă курмаççĕ

**КУКЕС, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Чылай колхозсенче ыраш вырас ĕç ăйăçлă пырать. Абашри «Урожай» колхоз ыраш вырма августăн 8-мĕшĕнче тухрĕ. Кунта кашни кунах 12-шер гектар выраççĕ. Тырă пырас ĕçе час-часах çумăр чăрмантарать пулсан та, ĕç планне ытлашшинех тултараççĕ. Уйрăмăнах Егор Степанов ертсе пыракан бригада членĕсем лайăх ĕçлеççĕ, 5 гектар вырăнне кашни кунах 9 гектар выраççĕ. Степанов бригадир хăйĕн бригадинче уйрăм участокра пĕччеишер е пĕчĕк ушкăнна ĕçлессине пĕлсе организациленĕ. Уяр вăхăта ахаль иртерес мар тесе, кунта кăнтăрла хиртех анатланаççĕ. Çумăр çунă вăхăтра канаççĕ тата çак вăхăтпа агитаторсем анлăн усă курaççĕ. Халĕ вĕсем Японие хирĕç пыракан вăрçă çинчен ăнлантараса параççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем вĕсене пысăк тимлĕхпе итлеççĕ, Совет правительствин ăслă политикине пырласа, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пуласçĕ.

Анчах та, Çĕньял, Шĕнерпус, Иккасси, Караçура ял Совечĕсене кĕрекен колхозсенче ыраш вырас ĕç ытла та çитĕлĕксĕр пырать. Колхозниксем ĕçе калаллăн тухмаççĕ, уйран ир кĕреççĕ, çавна пула ĕç тухăçлăхĕ те начар. Кунта ыраш вырма массăллăн тытăнман-ха: Халиччен ыраш симĕс тесе ларатчĕç, халĕ çумăр çине йăвантараççĕ. Çак колхозсенче пĕрлешӳллĕ столовăйсемпе ача ясликсем туман.

Ыраш пур тĕлте те пулса çитнĕ, анчах та районра машинăсемпе усă курмасçĕ-ха. Колхозсенче 95 жнейка пур, вĕсенчен 78 жнейкине хире те кисе тухман.

МТС кăçал комбайнсемпе 700 гектар вырса пухмалла. Иртнĕ çул МТС планĕ кăçалхи пекех иннĕ, анчах пурĕ те 40 гектар кăна вырса пухнă. Комбайнсене çак вăхăта çитсе те кирлĕ пек юсаман. Смирнова комбайнĕ ĕçленĕ 2-мĕш комкайна илер. Государство комиссийĕ йышăннă чухне çак комбайнăн 1,3 ситменлĕхне, Богданов юлташ ĕçленĕ 9-мĕш комбайнăн 10 ситменлĕхне тунă. Комисси йышăнăнранпа нумай вăхăт иртрĕ, Смирновăпа Богданов комбайнерсем çав ситменлĕхсене пĕтерессинĕн нимĕн те туман. Вĕсем кăçал комбайнсемпе ĕçлеме май пулмасть пулĕ тесе алла усса лараççĕ. МТС директорĕ Смирнов, старши механик Семенов юлташсем комбайнсене юсаса çитерес тесе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ.

**Г. ПЕТРОВ.**

## *Уяр çанталăка кĕтсе лараççĕ*

**КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа).** Ыраш вырас ĕç районра чăтма çук юлса пырать. Паянхи кун тĕлне районĕпе те 1500 гектар кăна вырнă. Нумай колхозсем çумăрлă çанталăк çине ярса, ыраш пулса тăкăнма тытăннă пулин те, никенсе вырмаççĕ. «Красная звезда», «Красный богатырь», «Сталь», «Красный Восток» тата Леваневский ячĕпе тăракан колхозсем уяр тăнă вăхăтра та çурласемпе кăна выраççĕ. Çавасемпе çулассине тата машинăсемпе вырассине организацилемен. «Сталь», «Знамя колхозника», Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче колхозниксем ушкăнпа выраççĕ, сдельщина çинчен вĕсене никам та ăнлантарса паман. Çавна пула кунта ĕç тухăçлăхĕ те начар. Столовăйсем çук, ача ясликсем организацилемен.

ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсем те хăшпĕр колхоз руководителĕсем хыççăн кайса, вĕсемпе килĕшсе ларaççĕ. Пшонкă ял Советĕнче уполномоченнăй пулса райсобес заведующийĕ Васильев, Шурсырма ял Советĕнче районри суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Сорокин юлташсем ĕçлеççĕ. Анчах та вĕсем сдельщина çинчен колхозниксене ăнлантарман, уяр çанталăкпа усă курса кунĕн-çĕрĕн ĕçлессине организацилемен. Вĕсем хăйсем те: çанталăк çумăрлă, ĕçлеме çук,—тесе ларaççĕ.

Паллах, районра лайăх ĕçлекен колхозсем те пур. Акă, Красноармейскри «Победа» колхозах илер. Ку колхоз тырпул пухса кĕме лайăх хатĕрленсе тухнă. Кунта уйрăм сдельщинăна, уйрăм участоксенче ĕçлеççĕ. Колхоз ыраша çурринне ытла вырнă. «Победа» колхоз государствăна 37,2 центнер тырă панă.

Анчах та çакăн пек паха тĕслĕхсене ытти колхозсене çитерес тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

**С. ШАДИН.**

## 12 çул пĕр ĕçре

**Ишлей** районĕнчи Шинер Тăрăнти «Новая жизнь» колхозра Кирилл Сорокин юлташ старши конюх пулса 12 çул хушши ĕçлет. Вăл лашасене юратса пăхать. Нумаях пулмасть уйра лашасене кĕтнĕ чухне пĕр тихана 2 çашкăр тапăннă. Сорокин, вăрăм пушăпах кашкăрсене хăваласа ярса, тихана сыхласа хăварнă. Çакăншăн Сорокин юлташа пĕр машăр çăмăга, пĕр машăр сăран атă, ăшă алса парса премилеллĕ.

**Н. НИКИФОРОВ.**

# Çамрăксем, эсир кăçал ăçта вĕренме каятăр?

*Канашри педучилищĕ сире кĕтсе илме хатĕр*

Кăçал пирĕн республикăри педагогика училищисене 810 çын вĕренме илмелле. Çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухакансем педагогика училищисене тата вăтам шкул пĕтернисем педагогика институчĕсене вĕренме кĕме пултараççĕ.

Канашри Н. А. Добролюбов ячĕпе тăракан педагогика училищи Чăваш республикинчи чи вăтă шкулсенчен пĕри. Кăçал ăна уçни 30 çул тултарчĕ. Çак 30 çул хушшинче училищĕрен 1098 учитель тата 238 воспитатель вĕренсе тухнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ халĕ те шкулсенче учительсем пулса ĕçлеççĕ. Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă учительсенчен ачасене вĕрентес ĕçре пысăк ситĕнӳсем тунăшăн правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулнисем те сахал мар. Халĕ Тăвай районĕнче учитель пулса ĕçлекен Д. С. Самуилов, М. Т. Парамонова юлташсене, Вăрмар районĕнчи П. И. Васильев тата Канаш районĕнчи А. С. Степанова юлташсене пĕтĕм республика лайăх пĕлсе тăрать. Вăл учительсен паха ĕçне правительство тивĕçлипех хакласа наградăларĕ.

Канашри педагогика училищине Чăваш республикинчи шкулсем валли учительсем хатĕрлес ĕçре лысăк ситĕнӳсем тунăшăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă.

Училище Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те ĕç пахалăхне чакармарĕ. 1942—1944 çулсенче кунтан 191 учитель тата 33 воспитатель вĕренсе тухрĕç.

Пирĕн çĕршывра педагогика училищисене уйрăмах пысăка хурса хисеплеççĕ. Педагогика училищисене вĕренӳ хатĕрĕсем вăхăтра тата çитĕлĕклĕ тупса параççĕ. Унта ĕçлеме ăста преподавательсем туса парассишĕн, вĕренекенсен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн пур чухне те тăрăшаççĕ.

Училищĕре вĕренекенсем валли пуян библиотека пур, унта 25.000 ытла кĕнеке. Вĕсемсĕр пуçне ытти тĕрлĕ пособисем те çитĕлĕклех. Кунти преподавательсенчен нумайĕшĕ вунпар е çирĕмпĕр çул учитель пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче 5 учитель хăйсен пархатарлă ĕçĕсемшĕн правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Павел Егорович Егоров—Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ. Вăл учитель пулса 39 çул ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче Павел Егорович пин ытла ачана учитель пулма вĕрентсе каларнă. Вĕсенчен нумайĕшĕ Павел Егоровича халĕ те тырă ятпа асăнаççĕ. Ун патне яланах ăшă кăмăллă çырусем çырaççĕ. Павел Егорович ачасене питĕ ăста вĕрентет. Иртнĕ çулта ăна РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ «Отличник народного просвещения» значокпа наградăланă.

Игнатий Григорьевич Тельцов—Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ. Учитель пулса 35 çул ытла ĕçлет. Вăл та хăйĕн хастарлă ĕçĕнĕн «Отличник народного просвещения» значока илме тивĕçлĕ пулчĕ. Александра Сергеевна Кустарина пикулта 25 çул ытла ĕçлет. Ачасене вĕрентмелли майсене лайăх пĕлет. Ыраш пикулĕсем валли кĕпенесем çырас ĕçе те хастарлăн хутшăнса ĕçленĕ. Вăл нумай çамрăксене вĕрентнĕ, учитель пулма пулăшнă. Халăха вĕрентес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна СССР Верховный Совет Президиумĕ «За трудовое отличие» медальпе наградăланă. Кунта ытти преподавательсем Д. З. Захаров, Е. А. Николаева, А. А. Егорова, А. Н. Васильевская юлташсем те нумай çулсем хушши ĕçлеççĕ.

Канашри педагогика училищинче вĕренекенсем валли условисем çителĕклĕ. Общежити тата столовăй пур, анат-çимĕç рабочисемпе пĕртан парса тăраççĕ, стипенди параççĕ. Кăçалхи çул училищĕне 175 ача вĕренме илнелле. Кăçал 7-мĕш классенчен лайăх палăрсемпе вĕренисе тухнă çамрăксем педагогика училищисене вĕренме кайма сĕнетĕп. Ку училищĕсенче сире хаваласлансах кĕтеççĕ.

**Е. ЕМЕЛЬЯНОВА.**
Канашри педагогика училищинче 3-мĕш класра вĕренекен.

## Учитель ĕçĕ—хисеплĕ ĕç

Эпĕ 1943 çулта Канашри вăтам шкулти 7-мĕш класран вĕренсе тухрăм. Вĕренӳ çулне Отечественнăй вăрçă кушăсенче вĕçлерĕмĕр. Çичĕ çул вĕренни çинчен, свидетельство кисен, Канашри педагогика училищине вĕренме кĕме заявлени патăм. Мана учительсем хатĕрлекен отделение илчĕç. Çапла вара эпĕ пулас учительсен шутне кĕтĕм. Çакă мана питĕ савăнтарчĕ. Эпĕ учитель ĕçĕ чыслă та мухтавлă, çав вăхăтрах пысăк та ответлă пулса тăнине лайăх ăнланатăп. Çавăнпа хăмăн юратнă профессине лайăх пĕлекен çын пулас тесе, пĕтĕм вăя хурса вĕренме тытăнтăм.

Халĕ эпĕ 3-мĕш класра вĕренетĕп. Ку тараччен вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пытăм. Кăçал малтăн пысăк савăнăç пулчĕ. Эпир икĕ эрнелĕх практикăна кайрăмăр. Эпĕ чи малтанхи хут ачасене вĕрентсе пăхрăм. Учитель ĕçĕ мана питĕ килĕшрĕ. Халĕ эпĕ учитель пулма вĕреннишĕн савăнатăп. Ман умра—халăх учителĕн мухтавлă та хисеплĕ ĕçĕ, анлă çул. Çав çулпа эпĕ хăюллăн утатăп.

Кăçал 7-мĕш классенчен вĕренсе тухакан çамрăксене эпĕ хам пекех педагогика училищисене вĕренме кайма сĕнетĕп. Ку училищĕсенче сире хаваласлансах кĕтеççĕ.

**Е. ЕМЕЛЬЯНОВА.**
Канашри педагогика училищинче директорĕ.

# Германие оккупацилес тĕлĕшпе ĕçлекен Контроль Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ

## *КОММЮНИКЕ*

1945 çулхи августăн 10-мĕшĕнче Берлинра Контроль Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Эйзенхауэр генерал Берлина пыма пултарайман пирки ларăва Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков председатель пулса ертсе пынă. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăран тата Францирен ларура Клей генерал-лейтенант, сэр В. Робертсон генерал-лейтенант тата Кениг генерал пулнă. Ларура çавăн пекех главнокомандующисен заместителĕсемпе политикăллă советниксем пулнă.

Лару малтанхи хут пуçласа Союзниксен Контроль влаçĕсен Штабне вырнаçтарма йышăннă «Каммергейхт» суртĕнче пулса иртнĕ. Çав çурт Америка секторĕнче, Берлин варринчен инçех мар вырнаçса тăрать. Ăна Америка çарĕсем юсаса хатĕрленĕ пулнă.

Контроль Совечĕ союзниксен контроллĕ власть органĕсен тĕрлĕ ĕçĕсене йĕркелес тĕлĕшпе тĕплĕ мерăсем палăртса çирĕплетнĕ.

Контроль Совечĕ Берлина апат-çимĕç тата çĕркăмрăкĕ тăратас тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен заместительсем каласа панине шута илнĕ. Координаци Комитетне палăртнă ĕçсем пурнăçа кĕрсе пынине сăнаса тăма тата çавăн çинчен вăхăтран вăхăта Контроль Советне пĕлтерсе тăма хушнă.

Тивĕçлĕ правительствăсенчен инструкцисем иличчен Контроль Совечĕ Координаци Комитетне Берлинри конференцин решенийĕсемпе çыхăнса тăракан ыйтусене, Контроль Советне пырса тивекенскерсене, малтанлăха пăхса тухма кăтартусем парса хăварнă. Франци представителĕ, йышăннă принципна килĕшсе, Франци правительствин позицийĕ çинчен каласа панă.

**БЕРЛИН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).**

## Совет генералĕсене Румынин аслă орденĕсемпе наградăлачĕ

**БУХАРЕСТ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Румынин правительствин «Мониторул Официал» ятлă вестникĕнче корольпе çар министрĕ алă пусса кăларнă указ пичетленĕ. Çав указ тăрăх, Румынири чи аслă çар орденĕпе—Михай Витязь орденĕпе 3-мĕш, 2-мĕш тата 1-мĕш класри хĕçсемпе пĕрле Совет Союзĕн Маршалне Р. Я. Малиновскине «Пĕтĕмĕшпе тăнмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Совет Союзĕпе Румынин çарĕсене çав тери чаплăн ертсе пынăмăн тата Çурçĕр Трансильвание ирĕке кăларас ĕçе татса панăшăн наградăланă.

Çакăнпа пĕрлех «Çарсене çав тери лайăх ертсе пынăшăн, гитлеризма хирĕç пыракан кĕрешӳре Румыни çарĕсемпе пĕрлешсе вĕсене питĕ пысăк пулăшу панăшăн» Михай Витязь орденĕпе 3-мĕш тата 2-мĕш класри хĕçсемпе пĕрле ăрми генералне М. В. Захарова, Совет Союзĕн Геройне С. К. Горюнов генерал-полковника, Совет Союзĕн Геройне А. Г. Кравченко генерал-полковника, Совет Союзĕн Геройне М. С. Шумилов генерал-полковника, Совет Союзĕн Геройне Н. П. Камынин генерал-лейтенанта тата Хĕрлĕ Çăран ытти генералĕсене те наградăланă.

### АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ СУЙЛАНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: юлашки суйлав округĕнче — Центрти Гулра суйлав результачĕсем палăрса пулса тăнă хыççăн (кунта лейбористсен кандидатне суйланă) суйлавсен итогĕсем çакăн пек курăнса тăраççĕ:

Лейбористсем 393 вырăн илнĕ, либералсем—12, рабочисен никама пăхăнман партийĕ—3, коммунистсем—2, комонуэлс партийĕ—1, Ирланди националисчĕсем—2 вырăн йышăннă. Оппозици партийĕсен вырăнĕсем çакăн пек пайланса тăраççĕ: консерваторсем—189 вырăн, Ольстер юнионисчĕсем—9, националистсем—2, национал-либералсем — 13 вырăн йышăннă.

Парламентри мĕнпур 640 вырăнтан правительство майлисен ытти партисенчен шăп 200 вырăн ытларах. Палатăн 14 членĕ независимăйсем пуласçĕ. Общинăсен палатинчи лейбористсен партийĕн хăшпĕр членĕсене халĕ пар ятне панине вĕсем лордсен палатине куçнă. Çапла вара общинăсен палатинче лейбористсен халĕ 389 вырăн шутланать.

### ФРАНЦИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙĔН ДЕПАРТАМЕНТСЕНЧИ КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕНЧЕ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔПЕ ПĔРЛЕШЕС ЫЙТАВА СÜТСЕ-ЯВНИ

**ПАРИЖ, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС).** Франции социалистсен партийĕн департаментсенчи конференцийĕсенче коммунистсен партийĕне тĕпренех тата халех пĕрлешессишĕн тăракан организацисен шучĕ кулленех ӳссе пынине курăнать. Юлашки кунсенче çавăн пек решени социалистсен партийĕн Об тата Анатри Шаранта департаменчĕсенчи конференцийĕсенче йышăннă. Социалистсен партийĕн ертсе пыракан комитечĕ социалистсен Буш-ди-Рон (Сарсель) департаментĕнчи конференцине икĕ членка—Феликс Гуэна тата Даниэль Мейера янă. Вĕсем хăйсен чи пысăк организацийĕ социалистсен партийĕн руководствипĕн килĕшӳллĕ мар решени йышăнассине чарса лартмалла пулнă. Конференцире туха калаçă хăйĕн сăмахĕнче Гуэн, Леон Блюм шухăшне палăртса, çапла каланă: коммунистсен партийĕпе пĕрлешни халĕ вăхăтсăр пулать, тенĕ. Конференцире ку ыйтупа хĕрӳллĕ прениссем пулса иртнĕ. Конференци епле решени йышăнни халлĕхе палăрмар-ха. Коммунистсемпе пĕрлешсе ĕçлессишĕн, анчах халех вĕсемпе пĕрлешессине хирĕç социалистсем, Крез, Нор, Па-де-Кале, Луар, Шер, Сона тата Луара департаменчĕсенчи конференцийĕсем каланă. Халех пĕрлешес марринпĕн Луара департаментĕнчи конференцин 48 делегачĕ сасăланă, халех пĕрлешессишĕн —21 делегат сасăланă.

### ПЕТЭНА СУД ТУНИ

**ПАРИЖ, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС).** Петэн ĕçне пăхса тухакан суд паян, ытти свидетельсем хушшинче, де Бринон свидетель каласа панине итленĕ. Де Бринон Германин Франции çар управленийĕн руководителĕ сумĕнчи Виши «правительствин» представителĕ, каярахпа «правительство» пуçлăхĕн Лаваленĕ статс-секретарĕ пулнă. Çавăн пекех суд Жозеф Дарнан свидетель сăмахне итленĕ. Дарнан «йĕркеçе государство хăрушсăрлăхне тытса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен генеральлăй секретарь» тата Виши полицийĕн начальникĕ пулнă.

Суд председателĕ де Бринонран—Петэн унăн ĕçне пĕлсе тăнă-и, тесе ыйтнине хирĕç де Бринон çапла ответленĕ: «Çапла, эпĕ маршала хут çине çырса та, сăмах вĕçĕн те час-часах отчетсем параттăм. Франçине Германи пĕрлешсе ĕçлес шухăша Петэн кăмăллăн йышăнатчĕ». Суд председателĕ пана тепĕр ыйту çине ответлесе де Бринон çапла каланă: союзниксен Дьепра пулса иртнĕ операцийĕ хыççăн Петэн чăнахах та Гитлĕр патне телеграмма янă. Телеграммăра вăл, Германи майлă пулса çапăçас шутна, хĕçпăшаллă çĕнĕ вăйсем туса хума хатĕр пулни çинчен каланă. Гитлера парăнса тăнине уйрăмăнах «чапа» тухнă Виширн пропаганда ĕçне ертсе пыракан Филиппа Анриона Петэн хушшинчи сыхăнусем енне пулни çинчен каласа, де Бринон çав сыхăнусем пит лайăх пулнă, тесе ответленĕ.

Çакăн хыççăн ыйтнă Дарнан хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Гитлера присяга панăнăн Петэн мана нитăçан та ӳпкелемен, Дарнан ертсе пыракан полици «МАК-сене» хирĕç, урăхла каласан, Франци партизанĕсене хирĕç пыракан операцисем çинчен Петэн пĕтĕмпех пĕлсе тăнă, тенĕ.

### ПАЛЛĂ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ШВЕЦИРЕ ИРЕККЕНЕХ ПУРĂНАССЕ

**СТОКГОЛЬМ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Швецири хăшпĕр хаçатсем çапла пĕлтернĕçчĕ: Швецире пурăнакан гитлеровецсенчен пуринчен ытла паллă мар çынсене кăна тытса хупнă, паллă гитлеровецсем ирĕкрен пурăнаççĕ, тенĕçчĕ. Августăн 8-мĕшĕнче «Афтонтиднинген» хаçат Швецире ирĕккĕнех пурăнакан паллă гитлеровецсен списокне пичетлесе кăларнă. Списокра чи малтан Шеман зондерфюрер ячĕ тăрать. Германи парăнăччен вăл Германин Стокгольмри миссийĕ çумĕнчи разведкăпа контрразведка бюровĕн начальникĕ пулнă. Малтан ăна тытса хупнă пулнă, кайрахпа Швеци власĕсем ирĕке кăларнă. Халĕ вăл Швецире ирĕккĕнех пурăнать. Çав вăхăтрах разведка бюровĕн сторожне Блоткона тытса хупнă.

Çавăн пекех Германин Гетеборгри консулĕ пулнă Шрота та тытса хупнă хыççăн ирĕке кăларнă. Тытса хупман ниçĕсем хушшинче çаксене кăтартса пама пулать: Германи çар миссийĕ çумĕнчи иккĕмĕш çар атташи фон Кенигсег. «Афтонтиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çав çын Швецин хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен шпионла сведенисем пухса пурăннă, Томсен посланник, мисси советникĕ Данцворст, çар атташи фон Утман генерал, генеральлăй консул Пфлейдерер, вăрман атташи фон дер Шуленбург, генеральлăй консул Кольб тата ытти сем те.

Кун пирки «Афтонтиднинген» хаçат çапла çырать: «Акомарта тытса хупнă нимĕçсем патне нумаях пулмасть генеральлăй консул Пфлейдерер пынă. Швецин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви ячĕпе вăл тытса хупнисене çапла каланă: 'вĕсенчен нумайĕшĕ пĕрре те айăплă мар, анчах техникăллă сăлтавсем тăрăх вĕсене халь ирĕке кăларма май çук», тенĕ.

### БЕЛЬГИРИ ТАСАТУ

**БРЮССЕЛЬ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Бельги хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсемпе пĕрлешсе ĕçленĕшĕн Бельгире 70 пин çынна арестленĕ. Вĕсенчен 16 пин çынна судпа айăпланă, айăпланисенчен 1117 сутăнчăка—вĕлермелле, 205 çынна — ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупмалла тунă. Вĕлермелле йышăннă 60 приговора пурнăçа кĕртнĕ.

### ТРУМЭН ПРЕЗИДЕНТ КАЛАНИ

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран хыпар панă тăрăх, Трумэн президент çапла пĕлтернĕ: Япони хăй парăнасси çинчен панă сĕнӳ тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Англипе, Россипе тата Китайпа пĕр шухăшлă пулса çыхăнса тăрать. Трумэн, çакăн çумне хушса, халĕ кунсăр пуçне урăх никам та калама çук, тенĕ.

### БРИТАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ НАЛАНИ

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Рейтер агентствин пĕлтернĕ тăрăх, августăн 10-мĕшĕнче премьер-министрăн резиденцийĕ пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă:

«Англи правительстви Япони правительствинчен нимĕнле официальнăй пĕлтерӳ те илмен-ха, анчах Токиоран Япони парăнасси çинчен пĕлтернĕ радиопередача тĕлĕшпе Англи правительстви Америка, Совет Союзĕ тата Китай правительствисемпе сыхăну тытать. Англи правительстви, çак ĕç уççăнах палăрса пулса тăрсан, çĕнĕ заявлени тăвĕ. Унччен пурин те хăйсен кулленхи ĕçĕсене туса тăмалла»,—тенĕ.

### ЛОНДОНРИ РАДИО ЯПОНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Лондонри радио çапла пĕлтерет: Японире вăрçăра парăнассишĕн тăракан çĕнĕ юхăма пирĕс пыракансем пурри палăрать. «Британи Юнайтед Пресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чунцин хулинче Токиоран панă радиопередачăна тытса илнĕ. Çав радиопередачăра çапла каланă: Япони çар министрĕ Япони парăнассине хирĕç тăрать, вăл Япони императорĕ Японин мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене малалла та çапăçма чĕнет, тенĕ.

### ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇА

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Рейтер агентствин корреспонденчĕ Гуам утравĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Лапка океан çинчи стратеглăллă авиацийĕн Спаатс генерал çапла каланă: августăн 10-мĕшĕнче ирхине американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăвăтлăран та хăвăтлă 70 бомбардировщикĕ Токиори çар арсеналĕ çинче бомбăсем пăрахнă.

**ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС).** Рейтер агентствин корреспонденчĕ Гуам утравĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, августăн 9-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăвăтлăран та хăвăтлă 80 бомбардировщикĕ Хонсю утравĕ çинчи Осако сывăхĕнчи Амагасаки хулинчи нефть тасатакан заводсем çине тата нефть цистернисем çине 500 тоннăлă яхăн бомбăсем пăрахнă.

**Ответлă редактор**
**В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Улатăрти Вăрман техникумĕ 1945—46 вĕренӳ çулне вăрман хуçалăх отделенийĕпе вăрман транспорчĕн отделенине студентсем вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

1-мĕш курса 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен, е 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вĕренме кĕрес текенсен вырăс чĕлхине тата литературипе, математикăпа тата СССР Конституцийĕпе экзаменсем памалла.

7 çул вĕренмелли шкултан 1944 е 1945 çулта „отлично" аттестатпа вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ.

II-мĕш курса вăтам шкулăн 9 тата 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене е урăх техникумра вĕреннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсен заявленине пĕрле çак документсене тăратмалла: вĕреннине кăтартакан свидетельство, автобиографи, вунçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕнпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка, врачран сывлăх çинчен илнĕ справка (документсене пурне те копийĕсене мар, хăйсене ярса памалла).

Кĕмелли экзаменсем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пуласçĕ. Вĕрентме октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçласçĕ.

1-мĕш курсра—80 тенкĕ, II-мĕшĕнче—100 тенкĕ, III-мĕшĕнче—120 тенкĕ, IV-мĕшĕнче—140 тенкĕ стипенди параççĕ. Отлично вĕренекенсене стипенди 25 процент ӳстерсе параççĕ. Техникумăн общежити, столовăй тата пособный хуçалăх пур.

Заявленисемпе документсене çак адреспа ярса памалла: гор. Алатырь, Ленина, 20 Дорстехникум.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00206 Типография №1, Управления полиграфпромышленности